НИКАМА ТА МАНМАН, НИМĔН ТЕ МАНĂÇМАН

Вăрçă витĕр – «полуторкăпа»

Эпĕ каласа парас текен çын, Григорий Григорьевич Григорьев, вăрçа тухса кайнă чухне автомашина рулĕ умне пуçласа ларса курнăскер пулман. Водитель правине вăл Инçет Хĕвел тухăçĕнче çар службинче пулнă чухне илнĕ. Хĕсметрен таврăннă хыççăн 1937 çулта Тивĕш ялповĕнче ГАЗ АА «полуторкăпа» ĕçлеме тытăннă. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинчен сывă, суранланмасăрах таврăннă, анчах та çÿçĕ пĕтĕмпех кăвакарса кайнă.

Пирĕн Тивĕш ялĕнчен вăрçă хирне чи малтан хамăрăн шкул директорĕнче ĕçленĕ Николай Яковлевич Яковлев тухса кайнă. Ку вăл каçкÿлĕм 1941 çулхи июнь пуçламăшĕнче пулнă. Çакна пире кĕçĕн аппа (аттен йăмăкĕ) каласа паратчĕ. Вăл ун чухне ял Советĕнче телефон патĕнче дежурнăйра ларнă. Телефонограмма килнĕ: «Н.Я. Яковлевăн тăхтаса тăмасăр Ишлей çар комиссариатне çитмелле. Çитерсе панă». Николай Яковлевич ун чухне мăшăрне çапла каланă: «Любушка. Тек эпĕ каялла таврăнаймастăп пулĕ. Вăрçа каятăп». Çавăн хыççăн ăна ялта урăх никам та курман.

Июнĕн 22-мĕшĕнче ял Советне телефонограмма çитнĕ: «Григорий Григорьевич Григорьевăн ЧН 05-31 автомашинăпа тăхтаса тăмасăр çар комиссариатне çитмелле». Кĕçĕн аппа каласа панă тăрăх, кун пек телефонограммăсем çав кун кăнтăрлаччен кăна 4 йышăннă.

Аттен пиччĕшĕ Гриша мучи те, ялпо машини те ялта пулман. Мĕншĕн тесен автомашинăпа унченхи кун Шупашкара тавар патне тухса кайнă пулнă. Гриша мучин мăшăрĕ (ун чухне вăл ялпора бухгалтерта ĕçленĕ) каласа паратчĕ: «Телефонограмма илнĕ хыççăнах Сарчак ялне чупрăм. Анчах та Григорие унта тĕл пулма май килмерĕ. Çукчĕ вăл унта. Килейменччĕ».

1960-мĕш çулсенче эпĕ, çак йĕркесен авторĕ, «Тиуши» колхозра шоферта ĕçлеттĕм. Григорий Григорьев Сарчакра пурăнатчĕ. Атăл юхан шывĕ урлă паромпа каçнă чухне е паром кĕтнĕ чухне эпир унпа час-часах тĕл пулаттăмăр. Вăл каласа пани асрах:

«Июнĕн 21-мĕшĕнче Шупашкартан таварпа таврăнаттăм. Тивĕше çитесси 11 километр юлсан вăйлă çумăр пуçланчĕ. Çырмара автомашина путса ларчĕ. Кабинăрах çĕр каçма тиврĕ. Вăрçă пуçланни пирки Григорий Соловьевран (районти шалти ĕçсен пайне чылайранпа ертсе пынă Ю.Г. Соловьевăн ашшĕ – авт.) пĕлтĕм. Вăл çар комиссариатне Очăкассинчи колхоз «полуторкипе» кайма тухнăччĕ. Вăл туртса кăларчĕ те ун чухне манăн автомашинăна.

Ялпона çитрĕм. Автомашинăна хăвăрт пушатрăмăр та çар комиссариатне тухса кайиччен тăвансемпе сывпуллашма Сарчака çаврăнса тухас терĕм (7 километр). Тăван кил тĕлне çитиччен мана «воронок» хăваласа çитрĕ. Сывпуллашма памарĕç. Автомашинăна каялла çавăрнă чухне урамра ларакан йывăç пура кĕтесне çаклатса йăшса антартăм. Ку пурана лайăх астăватăп. Вăрçă вĕçленнĕ хыççăн тепĕр 7 – 8 çултан та вăл çавăнтах ларатчĕ, хуçи вăрçăран таврăнаймарĕ.

«Воронок» хыççăн тÿрех Ишлейнелле пăрăнтăмăр. Машинăна платформа çине вырнаçтарса лартрăмăр. Юлташсем, ытларахăшĕ лайăх паллăнăскерсем, ăна çирĕплетме пулăшрĕç. Çавăн чухне кăна çаврăнса пăхрăм: тăватă «полуторка», виçĕ ЗиС-5, икĕ Як-3, ХТЗ тракторсем иккĕ. Пуйăс тапранчĕ.

Июнĕн 23-мĕшĕнче ирхине Серпухова çитсе техникăна пушатрăмăр. Çывăхрах заповедник пур тесе калаçатчĕç.

Пире вырнаçтарнă чаç зенитпа артиллери уйрăм дивизионĕ пулчĕ. Çапла вара маншăн вăрçă пуçланчĕ. Машинăна сăрларĕç те çар номерне пачĕç».

Эпĕ, статья авторĕ, çарта службăра пулнă пулин те, час-часах питĕ айван ыйтусем параттăм (халĕ çапла шухăшлатăп):

– Автомашинăпа мĕн турттарнă?

– Зенитчиксене мĕн кирлĕ-ха? Снарядсем. Зениткăсене сĕтĕреттĕмĕр, запас пайсем кÿрсе панă, апат-çимĕç те турттарма тивнĕ.

– Ăçта тиенĕ?

– Ытларах чухне вăрмансенче. Пĕр-пĕр тĕттĕмрех вырăна вакун илсе килсе параççĕ. Пăравусĕ каять. Çавăнта вакуна пушатса автомашина çине тиеттĕмĕр те.

– Тăшман самолечĕсем тăрук килсе кĕни пулнă-и?

– Нумай чухне мар паллах, çапах та кун пекки те пулкалатчĕ.

– Самолетсем вĕçсе килнĕ чухне хăрушă марччĕ-и? (Эпĕ юрăри сăмахсене лайăх астăватăп: «Не страшна нам бомбежка любая»).

– Вăхăт иртнĕ майĕпе пурне те хăнăхатăн. Эпĕ вара яланах хамăн машина айне пытанаттăм.

– Ку вара мĕнле? Кузовра снарядсем, эсĕ машина айĕнче-и?

– Эсĕ «подтяжка» е «перетяжка» тенине хăçан та пулин илтнĕ-и?

– Паллах ĕнтĕ илтнĕ. Мĕншĕн тесен полуторка çинче стажировкăра пулнă. Ку операцисене кашни кун тенĕ пекех туса ирттернĕ. Автола юхтарса кăларатăн, 22 болт пăрса кăларса поддона уçатăн (двигатель картерне çапла калатчĕç), шатун головкисене илетĕн, вкладышсем вырăнне тăхлан яратăн (припой пулман), шабрить тăватăн, юрăхлă шайбăсем суйласа илсе каялла вырнаçтарса лартатăн. Машина мĕн чухлĕ çÿренине кура çакна вĕçĕм туса ирттерме тиветчĕ. Машинăн яланах çул çÿренин шăрши пулмалла пулнă.

Кустăрмасем чăтатчĕç-и? (Эпĕ ку ыйтăва мĕншĕн патăм-ха? Мĕншĕн тесен пирĕн полуторкăсен резина кустăрмисем вĕçĕм çурăлса каятчĕç).

– Ытлашши тиетĕн – çурăлаççĕ. Анчах та эпир часах артиллери орудийĕсен кусматикĕсемпе усă курма пуçăнтăмăр. (Камера вырăнне пĕтĕмĕшпех резина).

– Нимĕç орудийĕсеннипе-и?

– Çук. Вĕсен дискĕсем ултă шпилька çинче, пирĕннисен вара – пилĕк шпилька, «полуторкăсенни» пекех. Ытлашши нумай тиесен вĕсем те çурăлатчĕç.

– Аккумулятор енчен мĕнле пулнă?

– Ытларах чухне рукояткăпа алăпа çавăрса тапрататтăмăр.

Вăл мана машина пирки каласа паратчĕ. Эпĕ вара, айванскер, пĕтĕмпех ыйтса пĕлме тăрăшаттăм:

– Эсĕ вăрçăра персе курнă-и?

– Çук. Пĕрре те.

– Винтовка пулса-и?

– Вăл пулса. Мана вĕçĕм чăрмантаратчĕ. Вăрăм, çурăм хыçне хуран – çурăма ыраттарать, ура айне хуран – лакăм-тĕкĕмре кĕмсĕртеттеретчĕ.

– Нимĕçсене курса-и хăть?

– Курса. Ку вăл вăрçă вĕçленес тĕлелле Хĕвел тухăç Пруссире пулнăччĕ. Пирĕн чаç Глейвиц хулинчен инçе мар вырнаçнăччĕ. Аманнисене çар госпитальне леçнĕ хыççăн чаçе таврăнаттăм. Бензин пĕтрĕ. Тĕрĕсленĕ хушăра инçех мар нимĕçле каласнине илтрĕм. Машинăран айккинерех пăрăнтăм та тĕмсем хушшине пĕшкĕнсе лартăм. Виççĕн килеççĕ. Нимĕçсем. Машина тавра çаврăнкаларĕç. Иккĕшĕ çавăнтах юлчĕç, тепри кайрĕ. Çур сехет те иртмерĕ, «Мерседес-Бенц» машина курăнса кайрĕ. Манăн машинăна кăкарчĕç те туртса кайрĕç. Сывă юлнишĕн Турра тав тумалли кăна юлчĕ.

Чаçе çуранах утса çитрĕм. Полк командирĕ мана ятлакаларĕ. Мана Америкăра туса кăларнă «Студебеккер» уйăрса пачĕç. Анчах та тепĕр уйăхранах мана хамăн машинăна тавăрса пачĕç. Эпĕ ăна рультен палласа илтĕм. Руль çине эпĕ çĕçĕпе касса «Гриша» тесе çырнăччĕ. Ăна урăх тĕс сăрланăччĕ ĕнтĕ, кузовне улăштарса çăкăр турттарма майлаштарнăччĕ. Çапла вара вăрçă пĕтиччен те, вăрçă хыççăн та демобилизацине киле таврăниччен унпа çăкăр турттарма тиврĕ.

– «Студебеккерпа» мĕн вара?

– Унпа çамрăк салтаксене çÿреме хăнăхтараттăм. Мĕншĕн тесен полуторкăна çамрăк салтаксем тапратаймастчĕç. Вăл манрах юлчĕ.

– Санăн çар сăн ÿкерчĕкĕсем çинче эсĕ мĕншĕн яланах фуфайкăпа?

– Шинель те панă. Анчах та фуфайка çывăхарах пулнă. Мĕншĕн тесен вăл яланах бензинпа тата çупа вараланса пĕтнĕскерччĕ. Фуфайкăпа çÿренĕ чухне пыйтă ун пекех ĕрчеймеспĕ. Салтаксем вăрçă çулĕсенче пыйтăпа питĕ аптăратчĕç.

– Санăнне пĕр медаль те курман эпĕ.

– Вăрçă хыççăн панисем пулнăччĕ. Пĕри халĕ те пур – «За победу над Германией». Çакса çÿремен.

Григорий Григорьевичпа нумай калаçаттăмăр. Хамшăн вара çавна ăша хывăрăм: машинăна яланах хатĕр, юсавлă тытмалла. Вăл кирек хăçан та çула тухма хатĕр пултăр.

Г. Г. Григорьев 1945 çулхи октябрĕн 10-мĕшĕнче демобилизаци йĕркипе киле килме тухнă. Полк командирĕнчен вăл çапла ыйтать: «Машинăпа мĕн тума тивет?» «Эсĕ унпа хăвăн ялпона кайма пултаратăн. Мĕн тума кирлĕ халĕ вăл пире? Авă мĕн чухлĕ халĕ кунта «американецсем», – хуравлать майор.

Полк командирĕ приказ çырать те хушса çавăн пирки калать. Белоруссе урлă кайма тивет. Литва вăрманĕсенче лăпках мар. Темĕн те пулма пултарать.

Григорий Григорьевич вăрçăран хăйĕн тăван ялне мĕнле таврăнни пирки çапла каласа паратчĕ:

«Çÿлĕсем йĕркеллĕ пулман. Мана чаçре çул çине парса янă пĕр пичке бензин хамăр çĕршыв чиккине çитичченех пушанчĕ. Май килнипе хăш чухне ытти шофертан пĕр-икĕ витре ыйтса илеттĕм, автомашинăна хускатма май килмен чухне буксирпа та килме тивнĕ.

Гродно патĕнче пĕр юхан шыв урлă каçмалли вăрçă вăхăтĕнче юрăхсăра тухнă кĕпере юсаманччĕ. Ăшăхрах вырăнта каçма хăтланнă чухне машина моторне шыв илчĕ. Машина сÿнсе ларчĕ. Белоруссе хĕрарăмĕсем пулăшрĕç. Вĕренсемпе 30 метра яхăн çыран хĕрне çитиччен сĕтĕртĕмĕр. Картертан шыв юхтарса кăларса автомашинăна тапратиччен вĕсем мана ĕçмелли-çимеллипе хăналарĕç, хăйсем патĕнче юлма ыйтрĕç.

Минскран тытăнса çулсем самай лайăхрахчĕ. Анчах та сивĕсем пуçланчĕç. Машина кабининче çĕр каçма май çукчĕ. Ялсенче чарăнса çĕр каçма кĕртме ыйтма тиветчĕ.

Мускавран иртсе килтĕм. Горький, Кстово хыçа юлчĕç. Чĕрере савăнăç хуçаланать. Часах – тăван кил, мăшăр, ывăл...

Çул çинче – çар патрулĕ, шлагбаум. Автомашинăн нимĕнле документчĕ те çук. Ăçта çухатса хăварнине те астумастăп. Автомашинăн çар номерĕ, арестлерĕç, автомашинăна туртса илчĕç...

Çапла вара автомашинăпа сывпуллашма тиврĕ. Киле çуранах декабрĕн 31-мĕшĕнче çитрĕм».

Çапла пулчĕ фронтовикăн аса илĕвĕ.Тепĕр çулталăкран кăна, 1947 çулта, Григорий Григорьев колхозăн ЗиС-150 автомашинине юсама тытăнчĕ. Водительте тăрăшрĕ. 1968 çулта çĕре кĕчĕ. Тивĕш ялповне пĕтериччен – 1954 çулченех таварсене лашасемпе тата кÿлнĕ вăкăрсемпе турттарчĕç.

Хальхи вăхăтра Интернет урлă интереслине чылай тупма май пур. Сăмахран, Г. Г. Григорьев çапăçнă зенитпа артиллери уйрăм дивизионĕн вăрçă çулĕсем пирки те. Вăрçăн малтанхи çулĕсенче – Тĕп фронт (Мускава хÿтĕленĕ), Волхов фронтĕ (ГЭС-а хÿтĕленĕ). Волхов тата Ленинград фронтĕсене пĕрлештернĕ хыççăн дивизионран зенитпа артиллери уйрăм полкне туса хунă. Ленинград блокадине татнă хыççăн 3-мĕш Прибалтика фронтне кĕнĕ, 15-мĕш сывлăш çарне хÿтĕленĕ. Аслă Çĕнтерĕве Хĕвел тухăç Пруссире Кольберг хули патĕнче кĕтсе илнĕ.

Лев КРАСНОВ.

Пĕлÿ илни çар ĕçĕнче те кирлĕ



1967 çулхи сăн ÿкерчĕкре Гурий Васильев капитана куратăр. Иртнĕ вăрçăра хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн ăна Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин 1 степеньлĕ тата 2 степеньлĕ орденсемпе тата медальсемпе чысланă.

Вăл 1913 çулта ноябрĕн 23-мĕшĕнче Çатракассинче çуралнă. Ашшĕ Василий Захаров, 1873 çуралнăскер, тепĕр 12 çултан пурнăçран уйрăлнă, çемьене тăлăха хăварнă. Йывăр ĕç амăшĕ Феодора Евдокимовна çине тиеннĕ, вăл 1881 çулта çуралнă.

Гурий 1928 çулхине Муркаш шкулĕнчен вĕренсе тухнă. Ун хыççăн Иваново облаçĕнче 3 çул ĕçленĕ, каярах Çатракасси ял Совечĕн секретарĕнче, вырăнти колхозра тĕрлĕ должноçра тăрăшнă. Тепĕр вунă çултан вăл РСФСР Юстици министерстви çумĕнчи Шупашкарти юридици шкулĕнчен пĕлÿ илсе тухнă. Майĕпен Гурий пурнăç çулĕ çине тăма пуçланă, Красноармейски районĕнче икĕ çул хушши халăх следователĕнче ĕçленĕ. 1940 çулхине вăл Ленинград çар округĕн 54 стрелковăй дивизийĕнче çар ĕçне пурнăçлама тытăннă.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçлансан, Гурий Карели фронтĕн политуправленийĕ çумĕнчи кĕçĕн политруксен курсĕнче вĕреннĕ. Тепĕр çулхине вăл стрелоксен 118 полкĕн автомат ротин политрукĕнче тăрăшма пуçланă кăна-ха, анчах та йывăр аманнă пирки ăна Кемь хулинчи çар госпиталĕнче сипленме тивнĕ. Сывалса тухнă хыççăн ăна миномет ротин командирĕн çумĕ пулма шаннă.

1943 çулхи ноябрь уйăхĕнчен тытăнса тепĕр çулхи август уйăхĕччен Гурий Ташкент хулинче çарпа педагогика институтĕнче вĕреннĕ. Ун хыççăн пĕлÿ илессине вăл Мускав хулинче тăснă. Çатракасси салтакĕ Аслă Çĕнтерĕве Белоруссин 2-мĕш фронтĕнче кĕтсе илнĕ. Апла пулин те ун чухнех вăл тăван тăрăха таврăнайман-ха, ыттисем пекех çар ĕçне малалла тăснă, апрель уйхĕнче Одер шывĕ урлă каçнă чухне йывăр аманнă. Сиплеврен тухнă хыççăн Гурий Васильев Куйбышев облаçĕнчи ПРиВО политуправленин резервĕнче тăнă.

1946 çулхи апрелĕн 26-мĕшĕнче вăл саппаса тухнă. Çав çулхине 1921 çулта Мордва Республикинче çуралнă Александра Константиновнăпа çемье çавăрнă.

Тăван тăрăха таврăнсан пĕр çулталăк хушши Муркаш район прокурорĕн пулăшуçинче ĕçленĕ, анчах та чире пула ку ĕçрен ăна уйрăлма тивнĕ. 1948 çулхи октябрь уйăхĕнчен пуçласа 1953 çулхи сентябрьччен вăл Çатракасси шкулĕнче физкультура урокне вĕренттнĕ. Çав хушăрах Г. Васильев пĕлĕве малалла ÿстернĕ. Каярах вăл вырăнти «Сталинец» колхоз бухгалтерĕнче тăрăшнă.

Р. МАКАРОВА.